# НИКАМА ТА МАНМАН, НИМĔН ТЕ МАНĂÇМАН

# Аслă Çĕнтерӳ 75 çул тултарать

**Этемлĕх кун-çулĕ унăн историйĕпе тачă çыхăннă. Вăл вара нихăçан та манăçмĕ – ăруран ăрăва куçса пырĕ. Тăван çĕршывăмăр мĕн чухлĕ пурăнать, Аслă вăрçăн 1941 – 1945 çулĕсенче фашистла Германи çарĕсене хирĕç пынă хаяр çапăçу хирĕсенче пуçне хунă паттăрсене çавăн чухлĕ ытларах асра тытса пурăнăпăр.**

1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче, вырсарникун, фашистла Германи пирĕн нумай нациллĕ Тăван çĕршыв çине кĕтмен çĕртен, вăрçăпа тухасси çинчен пĕлтермесĕр, вăрă-хурахла тапăнса кĕрет. Юратнă çĕршывăмăра нимĕç оккупанчĕсен чури пуласран çăлса хăварма пĕтĕм халăх кĕрешĕве тухать. Вырăспа пушкăрт, украинецпа грузин, белоруспа чăваш, якутпа киргиз, армянпа тутар, çармăспа казах... – пурте ирсĕр тăшмана хирĕç кун-çула шеллемесĕр хăюлăхпа паттăрлăх кăтартса çапăçаççĕ. Фронтпа тылăн тĕллевĕ пĕрре пулнă – çарпа халăх пĕрле пулса Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтересси. «Пĕтĕмпех – фронт валли! Пĕтĕмпех – çĕнтерӳ валли!» – çак девизпа тылрисем тăрăшнă тата фронтрисем çапăçнă.

Вăрçă çулĕсенче пирĕн Муркаш районĕнчен фронта 9845 çын тухса кайнă. Тăватă çул, 1418 кунпа çĕр хушши пынă хаяр вăрçă. Çĕнтерӳ кунĕ – 1945 çулхи майăн 9-мĕшĕ – пысăк çапăçусенчи вут-çулăмпа юн витĕр выртнă. Вăрçă хирĕсенче паттăрла çапăçса пуç хунисен йышĕнче ашшĕ е ывăлĕ, пиччĕшĕ е шăллĕ пирки пăшăрхантаракан хыпар илмен çемье пулманпа пĕрех. Пирĕн ентешсенчен 5491 çын фронтран тăван киле каялла таврăнайман. Тăшмана хирĕç пынă çапăçусенче пирĕн районтан тухнисем те паттăрлăх кăтартнă. Исеттеркĕ ялĕнчи Алексеевсен çемйинчен сакăр ывăл çапăçнă. Вĕсенчен Егор Алексеев та мухтава тивĕç: вăл хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр А. Матросов пек паттăрлăх кăтартнă. Унăн пиччĕшĕ Григорий Совет Союзĕн Геройĕн хисеплĕ ятне тивĕç пулнă. Çавăн пекех фашистсене хирĕç çапăçса хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Я. Анисимов, А. Воробьев, Б. Васильев, И. Мешаков Совет Союзĕн Геройĕсем, А. Быков Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ пулса тăнă.

Хаяр вăрçă çулĕсенче тыл ĕçченĕсем те тĕрлĕ енлĕ пулăшнă. Хĕрлĕ Çара хĕç-пăшал, çар техники, апат-çимĕç, тăхăнмалли тумтир парса тăнă. «Красное Сормово» (халĕ «Оринино») колхоз председателĕ П. Майков тата ферма заведующийĕ С. Соловьев çар самолечĕ тума 50-шар пин тенкĕ укçа хывнă. Колхоз уй-хирĕсенче тата ытти ĕçре ырми-канми вăй хурса хаяр тăшмана çĕнтерме пысăк тӳпе хывнăшăн пирĕн районти тыл ĕçченĕсемпе ватăсем тата аслăрах çулсенчи ачасем Тăван çĕршывăн «1941 – 1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче хастар ĕçленĕшĕн» медальне чылайăн тивĕçнĕ.

Çуркунне пĕтĕм тавралăх чĕрĕлсе илемлĕ сăн-сăпатпа витĕннĕ, сад-пахча чечексемпе ешерĕ тата вĕсенче вĕçен кайăксем хăйсен çепĕç сассипе илĕртнĕ вăхăтпа пĕрле килсе çитет пирĕн пата майăн 9-мĕшĕ – Çĕнтерӳ кунĕ. Кăçал вăл вара 75 çул тултарать.

75 çул... Çулсерен аяккарах та аяккарах тăрса юлаççĕ совет халăхĕпе Хĕрлĕ Çар вăрçă пынă вăхăтра паттăрлăх кăтартнă çулсем пирĕнтен. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă фронтовиксем сахаллансах пыраççĕ. Анчах та пирĕн телейлĕ те мирлĕ пурнăçшăн вăрçăн хаяр çулĕсенчи тан мар çапăçусенче паттăрла çапăçса пуçне хунă салтаксен ячĕсем ĕмĕр-ĕмĕрех упранĕç. Вăрçă ветеранĕсен тата тыл ĕççенĕсен паттăрлăхĕ те манăçмĕ.

Ку тĕлĕшпе Оринин ял тăрăхĕн администрацийĕ (пуçлăхĕ В. Пушкова) тата кунти ветерансен канашĕ (ертӳçи В. Вязов) вăрçăн хаяр çулĕсенче фашизма хирĕç пынă юнлă çапăçусенче пуçне хунă паттăрсене асра тытса çамрăксене патриотизмла воспитани парассипе пысăк тӳпе хываççĕ. Кашни çулах майăн 8-мĕшĕнче Лантăшпа Атапай, Мулкачкассипе Оринин ялĕсенче вăрçăран таврăнайман ентешĕсене чысласа лартнă палăксемпе обелисксем умĕнче митингсем ирттереççĕ. Вилнисене чысласа сăмах калаççĕ, палăксем умне чĕрĕ чечексем хураççĕ. Кунти вăтам шкулти ачасем литмонтаж хатĕрлеççĕ, Çĕнтерӳ кунне халалласа сăвă-юрă парнелеççĕ, Хисеплĕ хурал та тăраççĕ. Çак мероприятие Орининти Çветтуй Троица чиркĕвĕн игуменĕ Иннокентий атте тата вырсарни шкулĕ (ертӳçи Н. Иванова) хастар хутшăнаççĕ. Çĕнтерӳ кунне паллă тума пур ялтан та çынсем йышлăн пухăнаççĕ. Кунта вĕсене салтак пăттипе те хăналаççĕ. Шкул ачисем ĕç ветеранĕсене асăнмалăх хăйсем ăсталанă парнесем параççĕ.

Çĕнтерӳ кунне тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленсе ял тăрăх администрацийĕпе ветерансен канашĕ тата культура ĕçченĕсемпе «Оринино» тата «Восток» хуçалăхсем сахал мар тăрăшаççĕ: палăксемпе обелисксене йĕркене кĕртес, картасене юсаса сăрлас, чĕрĕ чечексем лартас тата ытти енĕпе те. Тавах вĕсене çавăншăн.

Вăхăт хăвăрт иртет: кун хыççăн кун, уйăхпа уйăх улшăнать. Çапла Çĕнтерӳ кунĕ те килсе çитет. Унăн 75 çулхи юбилейне тивĕçлипех тĕплĕн хатĕрленнипе кĕтсе илме хальтерех, паянах ĕçе кӳлĕнмелле тесе каласшăн эпĕ. Район территорийĕнче Аслă вăрçăран каялла таврăнайман ентешсене чысласа тунă палăксемпе обелисксем сахал мар. Вĕсене йĕркене кĕртессишĕн ĕçлемелле. Картисене юсаса сăрламалла, кирлĕ мар ӳсен-тăрантан тасатмалла. Паттăрсене сума суса çакнă Асăну хăмисем пирки те манмалла мар: вĕсене те йĕркене кĕртмелле.

Аслă Çĕнтерĕвĕн юбилей çулталăкĕнче çак ĕçрен, паллах, районти Культура çурчĕсен те аякка пăрăнса юлмалла мар. Асрах-ха орининсемпе мулкачкассисем Çĕнтерӳ кунне халалласа «Ылтăн вăчăра», «Куккук çаплах авăтать» спектаклĕсене ялсенчи сцена çине кăларса куракансене хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарни. Вĕсем вылянисем кинори евĕр манăçмаççĕ паянхи кун та. Районти ялсенче пултарулăх коллективĕсем сахал мар. Район администрацийĕн культура пайĕн Аслă Çĕнтерĕвĕн 75 çулхи юбилейне тивĕçлипе кĕтсе илессишĕн вĕсем хушшинче смотр-конкурс ирттермелле. Çакна кĕтеççĕ те вĕсенчен спектакль курма кăмăллакансем.

Пирĕн хушăра халĕ хаяр вăрçă çулĕсенче фронтра пулнă ветерансен йышĕ питех те пĕчĕк. Иртнĕ вăрçă ахрăмĕ те пирĕнтен каярах та каярах юлса пырать. Апла пулин те фронтовик-ветерансен тата вăрçăра пуç хунă салтаксен, çавăн пекех вăрçă çулĕсенчи хастар чун-чĕреллĕ, нимĕнпе виçейми паттăр тыл ĕçченĕсен ячĕсем халăх асĕнче ĕмĕр-ĕмĕр упранĕç. Çак хисепе тивĕç те вĕсем.

**А. ШАРИКОВ,**
**Раççей журналисчĕсен союзĕн членĕ.**

# Вăрçă пуçланнă кунах – фронта



Сăн ӳкерчĕкре эсир Мăн Токшикра 1909 çулхи мартăн 18-мĕшĕнче çуралнă Алексей Арбузов лейтенанта куратăр. Алексей ачаллах хутла вĕренме тăрăшнă, хăй тĕллĕн чылай вуланă. 1930 çулхине вăл Чуманкасси ялĕнче хутпĕлменлĕхе пĕтерессин инспекторĕнче ĕçлеме пуçланă. Унта пĕр çулталăк тăрăшнă хыççăн пĕлĕве малалла ӳстерме шухăшланă çамрăк Етĕрнене çул тытнă. Тепĕр 2 çултан Алексей педагогика техникумĕнчен вĕренсе тухнă. Вăл вăхăтра хутла пĕлекен çынсем питех те сахаллăн пулнă, учительсем те çитмен. Çамрăк учитель Алексей Иванович Шурча шкулĕнче ĕçленĕ, каярах Шупашкарти 1 номерлĕ типографинче корректорта тăрăшнă.

А. Арбузов мĕн пĕлнипе кăна çырлахман, ăсталăха тĕрлĕ енлĕ аталантарма тăрăшнă, 1936 çулта Шупашкарти фармацевтика шкулне пĕлӳ илме кайнă. Архиври документ тăрăх, унта вăл 3 çул вĕреннĕ тата лайăх паллăсемпе кăна, çакăн хыççăн Патăрьелти тата Калинин районĕнчи аптека управляющийĕнче тăрăшнă.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланнă кунхине вăл Калинин çар комиссариачĕ урлă Совет çарĕн ретне тăнă, МВО-н йывăр артиллерин 594-мĕш тупă полкĕнче полк аптекин ертӳçи пулнă. Каярах унăн Воронеж фронтĕнче 21-мĕш автотранспорт полкĕнче, Украина фронтĕнче 322 стрелковăй дивизийĕн 1132 стрелковăй полкĕнче аманнисене пулăшма тивнĕ.

Аслă Çĕнтерĕве лейтенант госпитальте кĕтсе илнĕ, унччен 4 кун маларах вăл Славут хулине хӳтĕленĕ чухне йывăр суранланнă, контузи пулнă. Август уйăхĕччен сывалнă хыççăн аптека ассистентĕнче, экспедици уйрăмĕнче тăрăшнă. Çар ĕçĕнчен ăна 1946 çулхи апрелĕн 16-мĕшĕнче чире пула хăтарнă. Вăрçă хирĕнчи хăюлăхпа паттăрлăхшăн Алексей Арбузова «Хĕрлĕ çăлтăр» орденпа тата «Германие çĕнтернĕшĕн» медальпе чысланă.

Вăл 1937 çулхи февральте Александра Алексеевăпа (1915 çулта çуралнă) мăшăрланнă. 1952 çулхи документ тăрăх, вĕсен 1943 çулта Вячеслав ывăл çурални паллă.

# Аса илӳсене çухалма парар мар

**1941 – 1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пирĕн çĕршывшăн чи йывăрри те хаярри пулнă. Апла пулин те вăрçă çулĕсем историре совет салтакĕсен чăн-чăн паттăрлăхĕпе çырăнса юлнă, фашистла Германие çĕнтерни питех те тарăн йĕр хăварнă. Ку вăл – пирĕн хăпартлану, çавăн пекех çухату та.**

Аслă Çĕнтерĕвĕн 75 çулхи юбилейĕ çывхарса килет. Историшĕн ку тапхăр нумаях та мар, çыншăн – пурнăç тăршшĕ. Унтанпа вара темиçе ăру та ӳсрĕ. Хальхи çынсем вăрçă хăрушлăхне курман, вĕсем ун пирки аслисен аса илĕвĕнчен, кĕнекесемпе кинoсенчен пĕлеççĕ.

Вăхăт вара хăйĕннех илет. Фронтовиксем, тыл ĕçченĕсем, Аслă Çĕнтерĕве çывхартма хутшăннисем сахалланса, аса илӳсемпе документсем, кăмăл-туйăмсем çухалса пыраççĕ. Çӳлерех асăннисене тĕпе хурса Аслă Çĕнтерӳ 75 çул тултарнине халалласа «Госархив современной истории Чувашской Республики» бюджет учрежденийĕ «Народная память. Сохраним Победу» акци йĕркелет.

Асăннă проект 1941 – 1945 çулсенчи вăрçа хутшăннисен, тыл ĕçченĕсен çемье архивĕсенчи документсене пухма, упраса хăварма пулăшать. Вăрçă çулĕсенчи синкерлĕхе сăнланă документсемпе патшалăх архивĕ çамрăксене патриотла воспитани парассинче, Тăван çĕршыва мала хума вĕрентессинче усă курма палăртать.

Архив документчĕсене тĕпе хурса хатĕрленĕ куравсемпе патшалăх архивĕн официаллă сайтĕнче (http://www.gasi.archives21.ru/ «Народная память» баннер) паллашма пулать. Акци 2020 çул тăршшĕпе пырать. Республикăра пурăнакансем документсене (çырусем, дневниксем, фронтовиксен аса илĕвĕсем, ентешсем çинчен çырнă статьясем, вăрçă вăхăтĕнчи сăн ӳкерчĕксем, ветерансемпе пĕрле тунă сăн ӳкерчĕксем, ветерансен чыслав хучĕсем, саламлă открыткăсем, Тав çырăвĕсем) çак адреспа илсе килме пултараççĕ: Шупашкар хули, Ф. Гладков урамĕ, 6 çурт. Патшалăх архивĕ пурне те акцие хутшăнма йыхăрать. Тĕплĕнрех 56-10-78 номерпе шăнкăравласа пĕлме пулать.

**Патшалăх архивĕ.**

*Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.*